

# Епле хитре чăваш чĕлхи!

## Утренник

### (шкул çулне çитмен ачасем валли)

**Ачасемпе ертсе пыракан чăваш çи-пуçĕ тăхăннă. Зала чăваш чĕлхи çинчен калакан сăмахсемпе илемлетнĕ.**

**Ертÿçĕ.** Сывă-и, пĕчĕк тусăмăрсем!

**Ачасем.** Сывах!

**Ертÿçĕ.** Сывă-и, пирĕн ачасен ашшĕ-амăшĕ, кукамăш-асламăшĕ, аппăшĕ-пиччĕшĕ тата ытти хăнасем! Пурне те ырă кун сунатпăр!

Паян эпир сирĕнпе Чăваш чĕлхи кунне паллă тума пуçтарăнтăмăр. Çак уяв кашни çулах çуркунне, ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче И.Я.Яковлев çуралнă кун пулать.

**Ачасем "Чăваш чĕлхи" юрă юрлаççĕ.**

**А.СЕРЕП сăвви**
**Е.ФЕДОРОВ кĕвви**

Шăлан çырли хĕрелнĕ,
Илем кÿресшĕн кĕр кунне.
Анне пире пилленĕ
Чăвашăн çепĕç чĕлхине.

Шăпчăк сасси илемлĕ,
Итле ăна эс савăнса.
Чăваш чĕлхи сĕткенлĕ,
Пуплер унпа пит юратса.

Куккук сасси кĕрнеклĕ
Ян-ян юхсассăн таврара.
Чăваш юрри хисеплĕ,
Ăна юрлаççĕ космосра.

**Ертÿçĕ.** Хĕллен хăйĕн паллисем пур, çуркуннен – хăйĕн. Çут çанталăкăн пур вăхăтне те пĕлетĕр-и-ха эсир, ачасем?

**Ачасем.** Пĕлетпĕр!

**Ертÿçĕ.** Тĕрĕслесе пăхар-ха, эппин. Эп вулакан сăвă йĕркисем çулталăкăн хăш вăхăчĕ çинчен?

Шурă юр ирĕлет,
Çеçен хир чĕрĕлет,
Ешĕл курăк тухать,
Ку хăçан пулать-ши?

**Ачасем.** Çуркунне!

**Ертÿçĕ.** Тĕрĕс, маттур, ачасем. Ку – çуркунне пулать. Халĕ пухăннă хăнасене çуркунне çинчен сăвăсем каласа парăпăр.

**1-мĕш ача.**

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел сават тĕнчене
Хĕл ыйхинчен вăратса.

**2-мĕш ача.**

Çитсессĕн ăшă çуркунне
Пур кайăксем те таврăнаççĕ,
Улăхсенче – курăк ăшне,
Вăрмансенче – турат çине
Йăва тумашкăн тытăнаççĕ.

**3-мĕш ача.**

Çурхи хĕвел çуттăн курăнать,
Сÿнми хĕлхем сапса ăшăтать.
Татти-сыпписĕр кайăк сассипе
Тĕнче юрласа, янраса тăрать.

**4-мĕш ача.**

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
Ешĕл тумтир тăхăнать.
Çеçен хир те ешерет,
Илемĕпе мухтанать.

**Ертÿçĕ.** Чăвашла илемлĕ калаçса савăнма пире И.Я.Яковлев алфавит туса пană, чăваш ачисем валли шкулсем уçнă, "Букварь" хатĕрленĕ.

**5-мĕш ача.**

Сар хĕвелĕ ялкăшать,
Пур тавралăх çуталать.
Яковлев ĕмĕр пурăнать,
Пире ялан ыр сунать.
Апрель кунĕ çуркунне,
Яковлев палăкĕ умне
Тухрĕç пĕчĕк ачасем,
Хучĕç чĕрĕ чечексем.

*|Ачасем И.Я.Яковлев портречĕ умне чечексем хураççĕ|.*

**"Яковлева сума суса" юрă янăрать.**

**В.ДАВЫДОВ-АНАТРИ сăвви**
**В.ЗАХАРОВ кĕвви**

Иван Яковлева манмастпăр,
Усратпăр халăх асĕнче.
Ăна сума суса юрлатпăр
Хамăр Чăваш çĕр-шывĕнче.

Çын вăй-халне вăл
çирĕп шаннă,
Пире вăл чĕннĕ çутталла,
Ăна Ульянов асăрханă,
Савса ал панă тăванла.

Вĕсем пĕрле тăрса çул хывнă
Ыр ĕмĕтпе малашлăха.
Пĕрле тыр акнă, тырă вырнă,
Пĕрле çĕкленĕ туслăха.

**Ертÿçĕ.** Мĕн тери илемлĕ пирĕн чĕлхе!

Шур акăш тĕкĕ евĕр çемçе те вăл, шăнкăр шыв юххи пек янăравлă та, чĕкеç чĕлхи пек çепĕç те. Тăван чĕлхе – анне чĕлхи, тăван чĕлхе – атте чĕлхи. Халĕ чăваш чĕлхи çинчен сăвăсем итлер.

**1-мĕш ача.**

Тăван чĕлхе, чăваш чĕлхи,
Епле хитре вăл янăрать.
Чи çепĕçси, чи лайăххи,
Пире ялан вăл вăй парать.

**2-мĕш ача.**

Пуçра мĕн чухлĕ шухăш санăн,
Мĕн чухлĕ ĕмĕт хальлĕхе,
Сана, ачам, пурне те пană
Чăваш чĕлхи, тăван чĕлхе!

**3-мĕш ача.**

Тăван чĕлхе!
Вăл çирĕп тимĕртен,
Упрас пулать ăна
куç шăрçи пек.
Мĕн пĕчĕкрен пире атте-анне
Вĕрентнĕ калаçма
чăвашăн чĕлхипе!

**4-мĕш ача.**

Тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи,
Çут тĕнчере эс чи хакли.
Чăваш чĕлхи, эс ман сăпкам,
Сана хам юррăмра лăпкам.

**"Хитре теççĕ, чипер теççĕ" юрă янăрать /кăшт улăштарнă/.**

Хитре теççĕ, чипер теççĕ
Сывлăм сыпнă чечексем.
Чечекрен те, чечекрен те
хитререх
Эпир, садик ачисем.

Ĕлккен теççĕ, ĕçчен теççĕ
Çил çунатлă чĕкеççем.
Чĕкеçрен те, чĕкеçрен те
ĕçченрех
Эпир, садик ачисем.
Аван теççĕ, паха теççĕ
Эпир хывнă юрăсем.

Янратар-ха, янратар-ха уççăнрах,
Çунатланччăр чĕресем.

**Ертÿçĕ.** Хамăр чĕлхене, тăван чĕлхене юратмалла, хисеплемелле пирĕн, усал сăмахсемпе калаçмалла мар. Ун пек чĕлхепе калаççан пирĕн аннесем хурланаççĕ. Аннесене пĕрре те кулянтармалла мар, унсăрăн вĕсем час ватăлĕç.

Яланах илемлĕ калаçма тăрăшмалла, никама та усал сăмахпа кÿрентермелле мар. Пĕрпĕрне кÿрентерсен асамлă сăмахсемпе усă курмалла.

**"Савăнăç парнеле" вăйă.**

**Вăйă йĕрки:** "Усал асамçă" вылякансене патакпа тĕкĕнет те, лешсем "хытса каяççĕ". "Лĕпĕшсем" вĕçсе килеççĕ те ачасене асамлă сăмах каласа йăл кулăпа "чĕртеççĕ".

**Ертÿçĕ.**

Эх, куçа–çке тыткăнлаççĕ
Сирĕн капăр тумăрсем.
Таврана ян! янратаççĕ
Хамăр сăвă–юрăсем.

*Ачасем такмак каласа чăваш ташши ташлаççĕ.*

**Ертÿçĕ.** Мĕнле маттур ачасем пирĕн. Сăвă калама, юрлама, ташлама – пурне те пултараççĕ. Халĕ тата сирĕн тавçăрулăха кăшт тĕрĕслер. Эпĕ сире тупмалли юмах паратăп, эсир тупсăмне тупăр.

1. Груша евĕр туйăнать,
Каçхине йăл! çуталать **/лампочка/.**

2. Хырăмĕ çук,
Çурăмĕ пур **/такана/.**

3. Алăсăр-урасăр – шаккать **/сехет/.**

Халĕ, ачасем, хăвăрт сăмахсем каласа пăхар-ха. Ман хыççăн каласа пырăр.

Урапийĕ – шăлтăр-шăлтăр,
Кĕперрийĕ – тăнкăр-тăнкăр.
Сивĕ çумăр – шăпăр-шăпăр,
Сар хĕвелĕ – йăлтăр-йăлтăр.

Маттур, ачасем. Халĕ тата сăвă итлер.

Эп чăваш ачи, саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене,
Юратап юрра-сăвва та,
Купăса та кĕслене.

**"Илемлĕ" юрă янăрать.**

Илемлĕ, илемлĕ,
Илемлĕ чăваш чĕлхи.
Илемлĕ чăваш чĕлхи
Калаçма пĕлсен кăна.

**Ертÿçĕ.**

Уя тухсан – мĕн хавас?
Трактор-машин сасси
пит хавас.
Пирĕн садике килсен –
мĕн хавас?
Пирĕн ачасен сасси пит хавас.

Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ! Килсех çÿрĕр пирĕн пата хăнана. Яланах ырă сунса кĕтетпĕр.

**Н.ЛЕВАЯ,**
**шкул директорĕн çумĕ.**

ЧР, Елчĕк районĕ,
Çирĕклĕ Шăхаль.

***СĂН ЎКЕРЧĔКРЕ:*** уяв саманчĕ.